«Тăван чĕлхе вăрттăнлăхĕсем» интернет олимпиада ыйтăвĕсемпе хуравĕсем

Ыйтусем

1. *Тетрадь çине çырăр* тени мĕншĕн тĕрĕс мар? Епле тӳрлетмелле?

2. Юлашки предложени мĕншĕн тулли мар – сиктерсе хăварнă сăмахне, вăл мĕнле член пулнине калăр.

– Ача та пур-и сан?

– Пур çав.

– Хĕр-и, ывăл-и вара?

– Хĕр.

3. Чăвашсем вырăсла <u>*клест*</u> текен кайăка *кукăр сăмса* теççĕ. *Кукăр сăмса* сăмах майлашăвне куçăмлă пĕлтерĕшпе каласси мĕнле мелпе пулнă – метафорăпа-и, синекдохăпа-и, метониипе-и? Мĕншĕн?

4. И.Я. Яковлев çырăвĕ сасăсене палăртас енчен, И.А. Андреев профессор çырнă тăрăх, мĕнле принципа пăхăннă?

5 Уйра – каç пуличчен ĕçлерĕмĕр хутлă предложенин пăхăнуллă пайĕ мĕнле мелпе çыхăннă?

6. «*… çыннăн чи пысăк ĕçĕ – çынна ырă тăвасси мар, çынна усал тăвасран хăйне хăй чарасси. Эпĕ кирек мĕнле çынна та çапла каласшăн: эсĕ мана ырă ан ту, анчах мана усал тăвасран та хăвна ху чар. Çынсем пурнăçра çак йĕркене çирĕппĕн пăхăнса пурăнсан тĕнче йăлтах урăхла пулĕччĕ*» йĕркесене мĕнле çыравçăн кун кĕнекинчен илнĕ?

7. Сăмах кам çинчен пырать? Сăвă ятне, авторне палăртăр.

Чăвашсен пур сумлă çын
Пурте ун ятне пĕлеççĕ.
Ваттисем каласнă чух
Ырăпа аса илеççĕ.
Чăвашсем валли вара
Чĕмперте акă шкул уçнă,
Алă çул çутта
Чăваша çав çын каларнă.

8. Çак йĕркесен авторĕ кам? Йĕркесем хăш хайлавран?
«О, мĕне пĕлтереççĕ чаплă художниксен пейзажĕсем»

9. 2022 çулта 100 çулхи юбилей паллă тăвакан 5 çыравçă ятне çырса парăр.
10. Чăваш топонимĕсенче тĕл пулакан *-вăш/-вĕш* топформант мĕнле пĕлтерĕшлĕ?

11. *Пĕр* хисеп ятне сăпат тăрăх улăштарăр.

12. *Хайхи ача кăшкăра пуçларĕ* предложенире *хайхи* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

13. 1930 çулта пичетленсе тухнă «Учебник чувашского языка для лиц, не владеющих чувашским языком» кĕнекен авторĕ кам?

14. *Ĕмпӳ, ĕмпичче* сăмахсен *ĕм* пайĕ мĕнле пĕлтерĕшлĕ?

15. Чăваш топонимĕсенче тĕл пулакан *-нар/-нер* топоформант мĕнле пĕлтерĕшлĕ?

16. Эсир наци малашлăхĕшĕн сăмах тытмалли çынсем… Халăхсене вĕсен литературипе виçеççĕ: − тенĕ Виктор Гюго. Чăваша малашне сирĕнпе виçĕç. Сулмаклăрах пусасчĕ Сирĕн çав тараса çине!...». Çак сăмахсене халăх умĕнче кам тата хăçан каланă?

17.Чăваш драматургине юрату виç кĕтеслĕхĕн проблемине чи малтан кĕртнĕ авторăн ячĕпе хушаматне калăр. Каярах çак проблемăна кам тата мĕнле драмăра малалла аталантарнă?

18. Пурнăç тăршшĕпе пухнă пĕлӳпе анлă усă курма пултарни (функциональная грамотность) вăл –

а) тăван тата тăван мар чĕлхепе вулама, çырма тата калама пултарнин шайĕ, шухăша чĕлхе нормисене (орфографие, пунктуацие т.ыт. те) пăхăнса çырупа тата сăмахпа каласа пама пултарни;

б) финанспа çыхăннă тата финанс енчен тĕрĕс йышăну тума, харпăр хăйĕн финанс ăнăçулăхне тупма кирлĕ темиçе компетенци пĕрлĕхĕ;

в) вĕренӳ задачисен хуравне тупма тата пурнăçăн йывăр лару-тăрăвне предметăн, предметсен пĕрлĕхлĕ тата универсаллă ĕç-хĕл мелĕсем çине таянса ансатлатма пултарни.

19. Пурнăç тăршшĕпе пухнă пĕлӳпе анлă усă курма пултарнине PISAн тĕнче халăхĕсемпе ирттерекен тĕпчевĕ хаклакан тĕп енсем:

а) вулав хăнăхăвĕ, математика пĕлĕвĕпе усă курма пултарни, çут çанталăк ăслăлăхне пĕлнипе усă курма пултарни, финанс пĕлĕвĕпе усă курма пултарни, тĕнче проблемисене, культурăсен хутшăнăвне тĕрлĕ енлĕ тишкерме пултарни, хăнăхăва пăхăнман çĕнĕлле шухăшлав;

б) тĕрлĕ информацие хальхи цифра платформисемпе усă курса пĕлтерме пултарни тата ИКТ компетенци, пĕтĕм тĕнче халăхне хутшăнтаракан акăлчан чĕлхипе усă курма пултарни;

в) предмет тата предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем.

20. Пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн тата тĕп пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн федераци патшалăх вĕренӳ çĕнĕ стандандрчĕсемпе ĕçлеме хăш вăхăтра пуçлаççĕ?

Хуравсем

1. Йăнăш *Хут çине çырăр* тенин витĕмĕпе пулнă. Тӳрлетсе *Тетраде çырăр* темелле.

2. *Ача* подлежащие каламасăр хăварнă.

3. Синекдохăпа, мĕншĕн тесен пĕтĕм кайăка ят панă чухне унăн пĕр пайне – сăмсине шута илнĕ.

4. фонема принципне.

5.-***Ччен*** çителĕклĕх аффиксĕпе.

6. Митта Ваçлейĕн кун кĕнекинчен.

7. Иван Яковлев. Александр Кăлкан «Чăвашсен пур сумлă çын».

8. Никита Бичурин, «Байкал» хайлавран.

9.
1. Пласкин Геннадий Александрович
2. Сандров (Александров) Николай Александрович
3. Чичканов Петр Николаевич
4. Афанасьев Егор Афанасьевич
5. Петĕр Ялкир
6. Воробьев Алексей Александрович

10. Шыв (юхан шыв) юппи пĕлтерĕшлĕ.

11. *Пĕр* хисеп ячĕ 1-2-мĕш сăпат аффиксĕсене йышăнмасть, 3-мĕш сăпат форми – *пĕри*.

12. Местоимени.

13.С.П. Горский.

14. «чи, питĕ» пĕлтерĕшлĕ.

15 «Шыв юххи» пĕлтерĕшлĕ.

16 Петĕр Хусанкай: 1969 çулхи чӳк уйăхĕнче çамрăк çыравçăсен канашлăвĕнче.

17. Гурий Комиссаров. Ф.Павлов «Ялта» драминче.

18. Пурнăç тăршшĕпе пухнă пĕлӳпе анлă усă курма пултарни (функциональная грамотность) вăл – в.

19. Пурнăç тăршшĕпе пухнă пĕлӳпе анлă усă курма пултарнине PISAн тĕнче халăхĕсемпе ирттерекен тĕпчевĕ хаклакан тĕп енсем: а.

20. Пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн тата тĕп пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн федераци патшалăх вĕренӳ çĕнĕ стандандрчĕсемпе ĕçлеме çак вăхăтра пуçлаççĕ: *2022 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче.*